Ӑсталӑх

# Кӗсле те, шӑпӑр та... чӑвашла юрлать

Пуш уйӑхӗнче Наци вулавӑшӗнчи «Мерчен» тӗпелӗнче Чӑваш Республикин культурӑн тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗн Виктор Черновӑн пултарулӑх каҫӗ иртрӗ. Вӑл Вӑрмар районӗнчи Шӑхаль ялӗнче кун ҫути курнӑ.

Палӑртнӑ мероприяти – культура комитечӗ пуҫарса янӑ «Аваллӑха упраса, малашлӑха ӗненсе» тата «Чӑваш Енӗн мухтавлӑ ҫыннисем» проекчӗсен черетлӗ ярӑмӗ.

Пирӗн несӗлсем музыка инструменчӗсемпе калама, вӗсене ӑсталама, илемлӗ кӗвӗ шӑрантарма пӗлекен ҫынсене асамҫӑ вырӑнне хунӑ. Шел те, паянхи кун вӗсен йышӗ сахалланса пырать. Ҫавӑнпа та халӑхӑн музыка инструменчӗсене упраса хӑварасси, ҫак ӳнере малалла аталантарасси, чӑвашсен паллӑ ҫыннисен еткерлӗхне тӗрлӗ халӑх патне илсе ҫитересси – пирӗн тӗп тӗллев.

Виктор Семеновичӑн ӑсталӑхӗ тӗрлӗ енлӗ: вӑл – чӑваш ӑс-хакӑлӗн управҫи, ӳнерҫӗ, мусӑкҫӑ, музыка инструменчӗсене ӑсталаканӗ, тӗпчев ӗҫӗсен авторӗ. Виктор Чернов чӑваш халӑхӗн музыка инструменчӗсене ҫӗнӗрен чӗртсе тӑраканӗсенчен пӗри тесен те юрать. Вӑл ӑсталанӑ кӗвӗ хатӗрӗсен шутӗнче кавал, нахра, шӑхлич, сӑрнай, най, пуч, параппан, тункӑр, вархан тата ытти те пур. Вӗсем чӑваш халӑхӗн чунне тыткӑнлаҫҫӗ. «Ун аллинче кӗсле те, шӑпӑр та... чӑвашла юрлать», – теҫҫӗ ун пирки халӑхра.



**Чӑваш наци конгресӗн культура комитечӗ тӑван халӑхӑн йӑли-йӗркине, унӑн историйӗпе культурине, чӗлхине упрас тата аталантарас тӗлӗшпе пархатарлӑ нумай ӗҫ тӑвать.**

**Тӑван халӑхӑн музыка инструменчӗпе ҫитӗнекен ӑрӑва кӑсӑклантарас, унпа вылякан ӑстасене тупса палӑртас тесе комитет «Шӑпӑр-кӗсле, ай, янра!» фестиваль конкурса та ҫӳлти шайра ирттерчӗ.**

Уява Чӑваш наци конгресӗн вице-президенчӗ Анатолий Ухтияров, Чӑваш Енпе Палестина халӑхӗсен туслӑхне ҫирӗплетес енӗпе ӗҫлекен общество президенчӗ Аль-Балауи Бассам Фатхи, Чӑваш Республикин тава тивӗҫлӗ ӳнерҫи Станислав Юхтар тата конгресӑн культура комитечӗн ертӳҫи Вера Архипова уҫрӗҫ. Вӗсем халӑхӑн музыка инструменчӗсен пӗлтерӗшне, унта халӑх историйӗ упраннине, вӗсене ҫӗнӗрен чӗртсе тӑратни паха пулнине каларӗҫ.

Хӑнасем Юрий Чернов хатӗрленӗ, юбилярӑн ӗҫӗ-хӗлӗпе паллаштаракан видеофильм пӑхрӗҫ.

Виктор Черновӑн хӗрӗ, вӗрентӳ меслетҫи Елена Енькка /Михайлова/ чӑвашсен нумай ӗмӗр хушши аталаннӑ музыка инструменчӗсем ҫинчен тӗплӗн каласа пачӗ. Чӑваш ҫӗрӗ, хӑйӗн ҫӗр пин юрри-ташшипе палӑрнӑскер, мӗн авалтанах музыка тӗрлӗ хатӗр-хӗтӗрне ӑсталас тӗлӗшпе чапа тухнӑ. Халӑхӑн Атӑл тӑрӑхне киличченех кӗвӗ-ҫемӗ хатӗрӗсем пулнӑ. Ку вӑл 2000 ҫул каяллахи Вӑтам Азири сӑкӑт цивилизацийӗпе ҫыхӑннӑ. Сӑкӑт патшалӑхӗнче археологсем тӑмран тунӑ лаптакрах тӗрлӗ ӳкерчӗклӗ пӗчӗк кӳлепесем тупнӑ. Унта ытларах ҫынсене сӑнланӑ. Вӗсен аллинче тӗрлӗ япала, музыка инструменчӗсем /хӗлӗхлисем тата вӗрсе каламаллисем/ те пулнӑ. Чи тӗлӗнмелли – ӳкерчӗксенче сӑнланнӑ ҫынсен ҫи-пуҫӗ XVIII ӗмӗрти чӑваш хӗрарӑмӗн тумӗпе пӗрешкел. Музыка инструментӗнчен нумайӑшӗ чӑвашсен музыка хальхи хатӗрӗсене аса илтереҫҫӗ.

Паллах, чӑвашсем музыка хатӗрӗсене хӑйсен несӗлӗсенчен, сӑвар-пӑлхарсенчен илнӗ. Пӑлхар патшалӑхӗнче 1000 ҫул каяллах музыка инструменчӗсем пулнине палӑртса хӑварнӑ тӗпчевҫӗсем.

Музыка инструменчӗсен тӗсӗсемпе те /вӗркӗчлисем, хӗлӗхлисем, ҫурхахлисем, хӑй тӗллӗн янӑраканнисем/ паллаштарчӗ Елена Викторовна. Вӗсенчен паллӑраххисем: шӑпӑр, кӗсле, сӑрнай, палнай, тренчӗл, тӳнтӗл, тутут, параппан, шӑхлич.

«Мерчен» тӗпелӗнче чӑваш халӑх музыка инструменчӗсем ҫинчен ҫырнӑ кӗнекесен куравне йӗркеленӗ. Тӗп вырӑнта Виктор Черновӑн «Чӑваш халӑх музыка инструменчӗсем» кӗнеке-альбомӗ тата вӑл тӗрлӗ ҫулсенче халӑхӑн музыка инструменчӗн аталанавӗ ҫинчен ҫырнӑ статьясем пулчӗҫ.

Ҫавӑн пекех Виктор Семенович хӑй ӑсталанӑ музыка инструменчӗсен куравне йӗркелерӗ, ӑсталӑх урокӗ ирттерчӗ, музыка инструменчӗсен историйӗпе, вӗсене еплерех хатӗрлемеллипе паллаштарчӗ. Музыкҫӑ сасӑ епле майпа тухнин вӑрттӑнлӑхне каласа пачӗ. Авалхи чӑвашсем хӑш-пӗр инструментпа ахаль пурнӑҫра ҫеҫ мар, ҫар ӗҫӗнче те усӑ курнӑ. Тӗслӗхрен, сӑрнай, кавал, пуч, нахра, параппан, какӑр хӑватлӑ сассипе салтаксене пӗр ҫӗре хӑварт пухма май панӑ.

Ҫакнашкал кӑсӑклӑ та пӗлтерӗшлӗ тӗл пулусене малашне шкул ачисемпе ҫамрӑксене нумайрах хутшӑнтарсан питех те усӑллӑ пулӗччӗ.

**Зоя ЯКОВЛЕВА,**
**Вера АРХИПОВА.**

Зоя ЯКОВЛЕВА сӑн ӳкерчӗкӗ.